# КУҪАРУ МАСТЕРӖ

XX-мӗш ӗмӗрӗн пӗрремӗш вунӑҫулӗнче чӑваш литературине пуҫласа яракан поэт Константин Иванов хӑйӗн пархатарлӑ ӗҫне тума тытӑнать (анчах та вӑл нумаях ӗҫлеймест: ӑна часах хӗнхур хупласа лартать). Ҫак чаплӑ поэт хӑйӗн вилӗмсӗр произведенине—«Нарспи» поэмӑна — ҫырнипе пӗрлех, пирӗн халӑха валли вырӑс поэчӗсен (Кольцовӑн, Лермонтовӑн, Некрасовӑн, Майковӑн) произведенийӗсене куҫарать.

Кунта, чи малтан, М. Ю. Лермонтовӑн «Песня про купца Калашникова» ятлӑ поэмине куҫарни ҫинчен калас пулать. Лермонтовӑн ҫак произведенийӗ, вырӑс халӑхӗн тивӗҫлӗхне тата чыслӑхне юратса мухтаканскер, Константин Ивановӑн чун-хавалне питех те ҫывӑх тӑнӑ, унӑн творчествӑллӑ шухӑшӗсене хавхалантарса ҫӗклентернӗ.

Халӑх шухӑш-кӑмӑлӗпе тулнӑ, халӑх юратнӑ произведенисем вилӗмсӗр, теҫҫӗ. «Нарспи» поэма тата «Песня про купца Калашникова» произведени пирки те ҫавнах калама кирлӗ. «Нарспи» поэма пирӗн халӑхӑн кӑмӑлӗпе чун-хавалне ҫӗклентерсе пырас ҫӗрте, унӑн илемлӗх туйӑмӗсене йӗркелес ҫӗрте калама ҫук паллӑ вырӑн йышӑнса тӑнӑ. Лермонтов ҫырнӑ юрӑ та ҫавӑн пекех. Вӑл чаплӑ юрӑ чӑваш литературин аталанӑвӗнче те пысӑк пӗлтерӗшлӗ пулнӑ. Октябрьти революциччен чӑваш чӗлхипе пичетленсе тухнӑ произведенисенчен, чи малтан, ҫав икӗ произведени—чи чаплӑ, чи хӑватлӑ, чи сулмаклӑ произведенисем пулнӑ.

Константин Иванов, сӑмахран, «Нарспи» поэмӑна ҫырман пулсан та, Лермонтовӑн юррине куҫарнипех те пирӗн литературӑн историне кӗрсе юлма пултарнӑ.

К. В. Иванов мӗн пирки ҫав ҫулте асӑннӑ поэтсен произведенийӗсене юратса куҫарнӑ-ха?

Лермонтовӑн «Песня про купца Калашникова...» ятлӑ произведенийӗ уйрӑмӑнах хӑйӗн халӑхлӑхӗпе палӑрса тӑрать. Кольцовӑн, Некрасовӑн произведенийӗсем те ҫавах. **Халӑхлӑх!** — акӑ мӗн пирки юратса куҫарнӑ вӗсене пирӗн классик К. Иванов.

Вырӑс поэчӗсен Кольцовӑн, Лермонтовӑн, Майковӑн поэзийӗнче чун-чӗрене пырса тивекен, вӑйлӑ лиризм пур. Пирӗн поэт К. Иванов та паллӑ лирик пулнӑ. **Лиризм!** — акӑ, иккӗмӗшӗнчен, вӑл мӗн пирки ҫав поэтсен сӑввисене пӗтӗм кӑмӑлпа юратса куҫарнӑ.

Виҫҫӗмӗшӗнчен тата ҫакна калас пулать: К. Иванова ҫак поэтсен сӑввисенчи янравлӑх, музыка питех те килӗшнӗ. Лермонтов сӑввисен янравлӑхӗ ҫавтери пысӑк пулнине хӑй вӑхӑтӗнче В. Г. Белинский те палӑртса панӑ. «Лермонтов ҫырнӑ кирек хӑш строкана вуласан та, музыка аккорчӗсене итленӗ пек туйӑнать, ҫав вӑхӑтрах тата чӗтренсе тӑракан хӗлӗхсене куҫусемпе асӑрхаса пыратӑн пек...» тенӗ. Сӑвӑсен **музыки!** — тата акӑ мӗн К. Иванова пӗтӗм чӗререн илӗртнӗ.

Ҫапла вара, Константин Иванов чаплӑ произведенисем ҫырнӑ вӑхӑтрах вырӑсла чӗлхерен чӑвашла куҫарас тӗлӗшпе те ӑнӑҫлӑн, пӗтӗм вӑйне хурса ӗҫленӗ, — вӑл куҫарас ӗҫре те чӑн-чӑн поэт пулнӑ. Ҫавӑнпа ӗнтӗ вӑл куҫарнӑ произведенисене вуланӑ чухне вӗсем урӑх чӗлхерен куҫарнӑ произведенисем пулнине пӗрре те сисместӗн.

К. Иванов — халӑх поэчӗ. Вӑл, хӑйӗн шухӑшӗсене 1905—1907 ҫҫ. революци обстановкинче аталантарнӑскер, вырӑссен писателӗсемпе поэчӗсене вуласа вӗреннӗскер, яланах халӑхӑн паллӑ юррисем патне туртӑннӑ. Сӑмахран, вӑл 1906 ҫулта вырӑс халӑхӗн «Дубинушка» ятлӑ юррине чӑвашла куҫарма тытӑннӑ. Ҫакӑ вӑл —питех те чаплӑ юрӑ: ӗҫ юрри вӑл, «ӗҫлекен хура халӑх юрри...», — ҫавӑнпа ӗнтӗ вӑл юрӑ Российӑри халӑхсем хушшине калама ҫук вӑйлӑн сарӑлнӑ.

Кунсӑр пуҫне К. Иванов «Марсельеза» юрӑ тӑрӑх «Тапранӑр, вӑранӑр» сӑвӑ ҫырнӑ. Ку вӑл К. Ивановӑн творчествинче чи революциллӗ сӑвӑсенчен пӗри пулса тӑрать.

К. Иванов ҫак юрӑсене ахальрен мар ӗнтӗ куҫарса ҫырнӑ. Юрӑсем халӑх хушшинче пысӑк вырӑн йышӑнса тӑнине вӑл лайӑх пӗлнӗ. Ҫавӑнпа та унӑн ӗмӗчӗсем халӑх юррисем патнелле туртӑнаҫҫӗ.

К. Иванов мӗнтери хӑюллӑн ӗҫлени ҫырнӑ чухне те, вырӑсларан куҫарнӑ чухне те чӑваш юррисемпе, туй такмакӗсемпе хӑюллӑн усӑ курнӑ.

К. Иваноов мӗнтери хӑюллӑн ӗҫлени ҫакӑнтан та курӑнать: «Песня про купца Калашникова...» поэмӑна куҫарнӑ чухне, вӑл хӑшпӗр вырӑнсене улӑштарарах куҫарать. Паллах, кунта ӑнсӑртран пулнӑ япала мар, ӑна вӑл пӗлсе, юриех тунӑ.

Акӑ вӗсем:

«И разделют по себе злы татаровья  
Коня доброго, саблю острую,  
И седельце браное черкесское».

К. Иванов ку вырӑна ҫапла куҫарнӑ:

«Курайман тӑшмансем уйӑрса илӗҫ  
Ырӑ утӑмпала ҫивчӗ хӗҫӗме,  
Ырӑ утӑм ҫинчен йӗнерне хывӗҫ».

Е тата:

«Православный народ ею тешился»,

—тесе ҫырнине:

«Ӑна ырӑ халӑх итлесе тӑчӗ», тесе куҫарать.

Всему народу христианскому  
Слава! — тенине:  
Мухтав **мӗнпур халӑха!**  
Мухтав!» — тесе куҫарать.

Паллах, ҫакӑ вӑл К. Ивановӑн мировоззренийӗнчен килнӗ. Прогрессивлӑ шухӑшсемпе ҫунатланнӑ поэт ҫак ӗҫ ҫине уйрӑм сӑмахсем енчен мар, ҫав произведенин тупсӑмӗ енчен пырса пӑхнӑ, ҫапла вара вӑл М. Ю. Лермонтовӑн протестне тӗрӗс ӑнланса илнӗ.

Ҫак паттӑр поэт, паттӑр талант хӑйӗн творчествӑллӑ ӗҫӗ урлӑ патша саманинчи тӗттӗмлӗхе хирӗҫ кӗрешнӗ.

Лермонтов — «вырӑс халӑхӗн ярсутӑ ҫӑлтӑрӗ, — ҫавтери хӑвӑрт ҫуталса, хӑвӑрт анса кайнӑ ҫӑлтӑр», тесе ҫырнӑ Н. А. Добролюбов. Пирӗн Константин Иванов та ҫавах: вӑл патша саманинчи сӗм тӗттӗм кунсенче вутӑнхӗмӗн ҫунса ҫӗкленнӗ те, хӑйӗн хӑватлӑ поэзине Лермонтовӑн, Кольцовӑн, Некрасовӑн поэзийӗнчи ялкӑшса тӑракан ҫулӑмсемпе пӗрлештерсе, кӗске вӑхӑтлӑха пулин те, ҫутӑ ҫӑлтӑр пек ҫунса тӑнӑ.

**В. ДОЛГОВ.**